# Николай Валуев хăйĕнчен çӳллĕрех çынпа пĕрремĕш хут Шупашкарта тĕл пулнă

● 4 стр.

ХЫПАР

1997 çулхи кăрлачăн 30-мĕшĕнче тухма пуçланă

*Анне, аппа та йăмăк, мăшăр… Эсир пуртан кил-çуртăм ăшă*

# Чăваш ХĔРАРĂМĔ

41(859) №, 2014, юпа, 11

Хакĕ ирĕклĕ.

16+

Хаçата электрон адреспа та çыру çырма пултаратăр: zuwxeraram@mail.ru.

*Шупашкар 2014*

### Пĕтĕм тĕнчери «Раççей – спорт çĕр-шывĕ» спорт форумне хутшăнакансене тата унăн хăнисене

*Хисеплĕ туссем!*

Сире Шупашкарта Пĕтĕм тĕнчери «Раççей – спорт çĕр-шывĕ» спорт форумĕ уçăлнă ятпа саламлатăп.

2014 çул çĕр-шывăмăр спорчĕшĕн чăннипех триумф шайĕнче пулчĕ. Раççей атлечĕсем Сочири Олимп тата Паралимп вăййисенче çĕнсе илнĕ медальсен шучĕпе рекорд турĕç, пĕтĕм тĕнчери пысăк ытти ăмăртура ăнăçлă тупăшрĕç. Çак çитĕнӳсем пире Тăван çĕр-шывăмăрпа мăнаçлантараççĕ, çитĕнекен ăрусемшĕн шанăç кӳрекен тĕллев пулса тăраççĕ.

Пирĕн паянхи тивĕç – пысăк çак хăвата упрасси, пулас çĕнтерӳсен çирĕп никĕсне хывасси, обществăра физкультурăпа сывă пурнăç йĕркине аталантарма ĕçпе пулăшасси. Тĕп тĕллевсен шутĕнче – çĕнĕ йышши спорт инфратытăмне йĕркелесси, çĕнĕ стадионсемпе пăр керменсем, сывлăх тата тренировка центрĕсем тăвасси, шкулсемпе аслă вĕренӳ заведенийĕсенче физкультура вĕрентĕвĕн пахалăхне ӳстересси. Тата, паллах, хăйĕн речĕсенче унта хутшăнакансен пысăк йышне, çав шутра çамрăк ăру представителĕсене пĕрлештерекен «Ĕçлеме тата хӳтĕлеме хатĕр» комплекс позицийĕсене çирĕплетес енĕпе уйрăмах тимлĕ пулмалла.

Форумра эсир пĕлтерĕшлĕ ытти темăна та сӳтсе явасса, тĕл пулура çуралнă шухăшсемпе сĕнӳсем ĕçре пулăшу кӳрессе шанатăп.

Сире тухăçлă та конструктивлă тавлашусем тата пĕтĕм ыррине сунатăп.

**Владимир ПУТИН,**
**Раççей Федерацийĕн Президенчĕ.**

## ÇАНТАЛĂК

| | кăнтăрла | çĕрле | |
|---|---|---|---|
| 11.10 | + 12 | + 7 | |
| 12.10 | + 12 | + 9 | |
| 13.10 | + 10 | + 8 | |
| 14.10 | + 7 | + 4 | |
| 15.10 | + 6 | + 2 | |
| 16.10 | + 3 | – 1 | |
| 17.10 | + 9 | + 2 | |

# Спортшăн чикĕ те, нацилĕх те çук

**Çак шухăша палăртрĕ Владимир Путин Раççей Президенчĕ çумĕнчи Физкультурăпа спорта аталантарас енĕпе ĕçлекен канашăн Шупашкарта иртнĕ ларăвĕнче**




Владимир ИВАНОВ сăн ӳкерчĕкĕ.

2, 4-5 стр.

Çĕнĕ Шупашкарти Олимп резервĕсен ятарлă 3-мĕш спорт шкулĕнче Раççей Президенчĕ çумĕнчи Физкультурăпа спорта аталантарас енĕпе ĕçлекен канаш ларăвĕ иртрĕ. Ăна РФ Президенчĕ Владимир Путин ертсе пычĕ.

Унта Чăваш Республикин Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев, РФ Президенчĕн федерацин Атăлçи округĕнчи полномочиллĕ представителĕ Михаил Бабич, канаш членĕсем /пурĕ 32 çын/ тата ытти хăна хутшăнчĕç. Ларура 2016-2020 çулсенче спортăн пурлăхпа техника базине аталантарас тата физкультурăпа спорт мероприятийĕсен тытăмне лайăхлатас ыйтусене сӳтсе яврĕç.

«Паянхи уяв Пĕтĕм тĕнчери утмалли кунран пуçланни савăнтарчĕ. Çакнашкал мероприяти пирĕн çĕр-шывра пĕрремĕш хут. Хăвăрт утас енĕпе тĕнче ăмăртăвĕсенче палăрнă спортсменсемпе мăнаçланакан регионта пуçласа иртни уйрăмах пĕлтерĕшлĕ. Раççейре çуран тата йĕлтĕрпе чупас енĕпе массăллă стартсем йăлана кĕнĕ ĕнтĕ. Ку та лайăх пуçару, малашне те ирттересчĕ ăна. Çак кунсенче хамăн та 9 километр утмалла пулчĕ, халĕ те йăлт ыратать-ха, – ларăва кăмăллăн уçрĕ Владимир Владимирович. – Пуш уйăхĕнчи /кăçал Мускавра иртнĕ лару çинчен сăмах пырать. – **А.М./** ларура палăртнă тĕллевсем пурнăçланма тытăнни кăмăлтуйăма çĕклет. Ун чухне эпĕ массăллă спорта аталантарасси, кашни çынна физкультурăпа туслаштарасси, çĕр-шывăн пĕрлештернĕ командине тата спорт резервне хатĕрлесси пирки сăмах пуçарнăччĕ. Анчах та вĕсене пурнăçласси пурлăхпа техника бази пуян пулнинчен килет. Çавăн пекех спорт мероприятийĕсен тытăмне лайăхлатмалла: çынсем, уйрăмах çамрăксем, унта хутшăнса хăйсене кăтартчăр, вĕсем сывă пурнăç йĕркине пăхăнма хавхалантарччăр. **Аса илтеретĕп: 2020 çул тĕлне пирĕн çĕр-шывра спортпа туслисен йышĕ 40 процентран кая мар пулмалла. Хальхи вăхăтра – 27%. Чи лайăххи – çак кăтарту çултан çул ӳссе пыни. Çапах ку çителĕксĕр.** Иртнĕ ларура эпир «Ĕçпе хӳтĕлеве хатĕр» комплекса тепĕр хут чĕртсе тăратма, спорт клубĕсен йышне ӳстерме тата Раççейре Пĕтĕм тĕнчери «Спорт – пурин валли те» юхăм пулăшнипе тĕрлĕ мероприяти ирттерме йышăнтăмăр», – терĕ çĕр-шыв Президенчĕ.

# Спортшăн чикĕ те, нацилĕх те çук

**РАÇÇЕЙРЕ**

**2020 çул тĕлне пирĕн çĕр-шывра спортпа туслисен йышĕ 40 процентран кая мар пулмалла. Хальхи вăхăтра – 27%.**

**ЧĂВАШ ЕНРЕ**

**Ятарлă программăсемпе килĕшӳллĕн республикăра спортăн 50 объектне çĕкленĕ. Кашни районпа хулара физкультурăпа спорт комплексĕсем тунă, вĕсене пурне те спорт шкулĕсене панă.**




Владимир Путин канаш членĕсемпе хăнасене малашне пурнăçламалли çĕнĕ тĕллевсемпе те паллаштарчĕ. Федерацин «Физкультурăпа спорта аталантарасси» тĕллевлĕ программин вăхăчĕ тепĕр çул вĕçленсе пынă май уйрăмах вырăнлă ку. Вăл каланă тăрăх – çĕнĕ проекта РФ Правительстви çирĕплетнĕ, ун валли 2020 çулччен федераци бюджетĕнчен 73,9 млрд тенкĕ уйăрнă. «Пĕчĕк бюджетлă объектсем тумалла /кунта сăмах картишсенче е парксенче спорт лапамĕсем пулмалли çинчен пырать. – **А.М/.** Вĕсем çынсене питĕ кирлĕ. Ку енĕпе регионсен, муниципалитетсен тата общество организацийĕсен тăрăшмалла. Çак ĕçе предпринимательсене явăçтармалла. Çĕнĕ программăра уйрăм регионсенче спорта аталантарас темăна та вырăн уйăрнă. Уйрăмах Крымпа Севастопольти спорт объекчĕсене çĕклемелли çине пусăм тунă. Вĕренӳ учрежденийĕсенчи спорт керменĕсен те пушă лармалла мар. Киввисене юсамалла тата çĕннисем тумалла», – пусăмласа каларĕ Владимир Путин.

РФ спорт министрĕ Виталий Мутко юлашки çулсенче тунă ĕçсем тата малашне пурнăçлама палăртнă тĕллевсем çинче чарăнса тăчĕ. «2006 çултанпа Раççейре спортăн 33 пин объектне хута янă. Ку енĕпе пире уйрăмах партнерсем пулăшаççĕ. Акă темиçе çул каялла «Газпром – ачасене» акци старт илчĕ. Предприяти пулăшнипе 73 регионта спорт керменĕсем çĕкленнĕ. Кашни республикăпа облаçре спорт хатĕрлевĕн центрĕсене тума йышăннă. Çакă спортăн уйрăм енĕсене вăйлăрах аталантарма май парĕ», – терĕ Виталий Леонтьевич. Спорт ведомствин ертӳçи пирĕн çĕр-шывра сывă çулсенче иртекен ăмăртусене епле хатĕрленни пирки те каласа пачĕ, килес çул Шупашкар йышăнакан Европа чемпионатне çӳллĕ шайра йĕркелеме шантарчĕ.

Ларура çавăн пекех РФ вĕренӳ министрĕ Дмитрий Ливанов, çăмăл атлетсен Пĕтĕм Раççейри федерацийĕн президенчĕ Валентин Балахничев, РФ Паралимп комитечĕн председателĕ Владимир Лукин, Чул хула облаçĕн кĕпĕрнаттăрĕ Валерий Шанцев, Олимп комитечĕн вице-президенчĕ Владимир Лисин тата ыттисем каларĕçĕ.

**Чăваш Республикин Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев Чăваш Енре спорт инфратытăмне аталантарас енĕпе нумай ĕç тунине палăртрĕ. «Ятарлă программăсемпе килĕшӳллĕн республикăра спортăн 50 объектне çĕкленĕ. Кашни районпа хулара физкультурăпа спорт комплексĕсем тунă, вĕсене пурне те спорт шкулĕсене панă. Физкультурăпа спорт çынсен сывлăхне çирĕплетет кăна мар, çыннăн пурăнас кунçулне вăрăмлатать. Юлашки çулсенче демографи лару-тăрăвĕ лайăх енне улшăнчĕ: çуралакансен йышĕ ӳсрĕ», – пĕлтерчĕ Михаил Васильевич. РФ Президенчĕ Чăваш Ен Пуçлăхне физкультурăпа спорта аталантарас ĕçре пысăк çитĕнӳсем тунăшăн тата хăй те сывă пурнăç йĕркине пăхăнса ыттисене тĕслĕх кăтартнăшăн тав турĕ.**

Лару хыççăн Владимир Путин Пĕтĕм тĕнчери спорт организацийĕсен тата хамăр çĕр-шыври спорт федерацийĕсен ертӳçисемпе тĕл пулчĕ. Унта вĕсем тĕрлĕ ыйтăва пăхса тухрĕç. РФ Президенчĕ нумаях пулмасть çĕнетнĕ керменпе паллашрĕ, манежра тренировка ирттерекен çамрăк спортсменсемпе курса калаçрĕ.

**Андрей МИХАЙЛОВ.**




* * *

«Спорт пĕрлĕхĕнче – тĕнче тăнăçлăхĕ: пĕтĕм ĕçсен стратегийĕ» пленарлă лару Çĕнĕ Шупашкарти «Сокол» Пăр керменĕнче иртрĕ. Ăна Раççей Федерацийĕн спорт министрĕ Виталий Мутко ертсе пычĕ. Виталий Леонтьевич ларăва уçнă май чи хаклă хăнасемпе паллаштарчĕ. Вĕсен ретĕнче – РФ Правительствин Председателĕн çумĕ Аркадий Дворкович, Пĕрлешнĕ нацисен организацийĕн /ООН/ Генеральнăй секретарĕн спорт ыйтăвĕсемпе ĕçлекен пулăшуçи Вильфред Лемке, студентсен Пĕтĕм тĕнчери Союзĕн президенчĕ Код Луи Гацен, «Спорт-Аккорд» пĕтĕм тĕнчери спорт организацийĕн президенчĕ Мариус Визер, РФ Патшалăх Думин Председателĕн пĕрремĕш çумĕ, Раççей Олимп комитечĕн президенчĕ Александр Жуков, Олимп вăййисен тата тĕнче чемпионĕсем – РФ Патшалăх Думин депутачĕ, Раççей Геройĕ Александр Карелин, Олег Саитов, Александр Попов, Татьяна Казанкина, Александр Сальников, ытти çăлтăрсемпе тĕнчери тата çĕр-шыври спорт федерацийĕсен ертӳçисемпе паллă тренерсем.

Форума хутшăнакансене Раççей Президенчĕ Владимир Путин саламларĕ.

– Паян Шупашкарта физкультурăпа спорта аталантарас ыйтусемпе Пĕтĕм тĕнчери V форума уçрăмăр. Пирĕн çĕршыв Пĕтĕм тĕнчери спорта аталантарас тĕлĕшпе сулмаклă вырăн йышăнать. Спортри ăсталăха ӳстерессипе тата кашни регионтах физкультурăпа спортра массăлăха малалла аталантарассипе нумай курăмлă ĕçлетпĕр. Эпĕ шанатăп, хамăр çĕнсе илнĕ позицие тата çӳллĕрех шая çĕклĕпĕр, – терĕ Владимир Владимирович.

Аркадий Дворкович вице-премьер «Раççей – спорт çĕршывĕ» форума хутшăнакансене пурне те РФ Правительстви ячĕпе Шупашкарта çĕр-шыври физкультурниксемпе атлетсен çулталăкри чи пысăк пухăвĕ пуçланнă ятпа ăшшăн саламларĕ.

– Юлашки çулсенче Раççей чăннипех те тĕнчере спорт çĕршывĕ пулса тăчĕ. Пирĕн шĕкĕр хуласенче кашни уйăхра тенĕ пекех спортăн тĕрлĕ енĕпе тĕнче тата Европа чемпионачĕ ирттереççĕ. Нумаях пулмасть кăна Челябинскра – дзюдо, Хусанта вара илемлĕ гимнастика енĕпе тĕнче чемпионачĕсем вĕçленчĕç. Асрах-ха пĕлтĕр Хусанта иртнĕ студентсен Пĕтĕм тĕнчери XXVI Универсиади. Ăна нумайăшĕ нимĕн ӳстермесĕр çуллахи Олимп вăййисемпе танлаштарчĕ. Спорта эпир политикăпа çыхăнтарасшăн мар. Вăл çынсен пурнăçне лайăхлатма, çĕр-шыв экономикине тĕреклетме пулăшнипе пĕрлех халăхсен туслăхĕпе тĕнчери тăнăçлăха çирĕплетес тĕлĕшпе пысăк пĕлтерĕшлĕ, – терĕ Аркадий Владимирович.

Ларура çавăн пекех Мариус Визерпа Вильфред Лемке, «Спорт пуриншĕн те» Пĕтĕм тĕнчери Ассоциаци Президенчĕ Хо Чонг, пĕтĕм тĕнчери шахмат федерацийĕн /ФИДЕ/ президенчĕ Кирсан Илюмжинов, Раççей Олимп комитечĕн ертӳçи Александр Жуков, Раççей Федерацийĕн вĕрентӳ, спорт министрĕсем Дмитрий Ливановпа Виталий Мутко сăмах каларĕç.




**Андрей МИХАЙЛОВ, Петр СИДОРОВ**
**cap.ru сайчĕн сăн ӳкерчĕкĕсем.**



# Океан хĕрринче канас тенĕччĕ пĕррехинче...

**Черетлĕ отпуска черетлĕ çĕр-шыва пуçтарăннă май хамăн чĕлхе саппасне "Овербукинг" терминпа пуянлатма тивесси пирки кам шухăшлама пултарнă? Сăмахĕ, чăн та, кăмăллах мар, пĕлтерĕшне те малтанах ăнланмарăм та. "Вокруг света" турфирмăн Шупашкарти представительствинче вăй хуракан оператор ĕмĕр асра юлмалла ăнлантарчĕ... Юрĕ, йĕркипех каласа парам.**

## Теветкеллĕх

Кашни çулах аякри çĕр-шыва çула тухма хăнăхнăскерсем кĕр çывхарнă май кăçал та тăрăшсах маршрут тишкерме пуçларăмăр. Анчах та хакĕсем ай-яй! çыртаççĕ çав. Пирĕн кĕсьешĕн чухах çĕре вара хамăрăн кăмăл туртмасть: Египет, Турци, Тунис... Унсăр пуçне, пулса та курнă унта. Шыракан тупать тет. Марокко çĕрĕнчи Агадир хулинчи отель акци йĕркеленине пĕлтĕмĕр Интернетран. Ытти чухнехинчен кăшт кăна йӳнĕрех хакпа пырса курма чĕнет. Анчах та акци пĕр эрне кăна пырать. Ĕлкĕрес пулать! Юрать пуçлăхсем ăнланаççĕ. Отпуска графикра палăртнинчен эрне маларах ыйтсан хирĕçлемерĕç – канма ирĕк пачĕç. Укçатенкĕпе те тивĕçтерчĕç. Эпир вара хăвăртрах турфирмăна кайса сахал та мар, нумай та мар – 50000 тенкĕ – хыврăмăр. Ку – путевка тата самолетпа вĕçмелли билетсен пĕр пайĕ кăна-ха. Тепĕр кунах савăнтарчĕç – эпир ыйтнине тивĕçтернĕ. Ура! Чăн та, хĕрĕмĕн юлташĕн, пирĕнпе пĕрле кашни çулах тухаканскерĕн, кăмăлĕ кăшт хуçăлнăччĕ. Ара, унăн куккăшĕн ывăлĕ шăпах çак кунсенче авланать-çке. Хайхи куккӑшĕ вара пирĕн республикăра чи паллă предпринимательсенчен пĕри. Шеп те пулĕ апла туй! Хĕр пĕрчи, эпир яланах кĕр енне кăна каяссине пĕлекенскер, канăва çăвĕпех кĕтрĕ. Мĕн тумалла ĕнтĕ?! Унта та, кунта та каяс килет. Марокко çĕнтерчĕ, пике пирĕнпе пĕрлех сумка пуçтарма пуçларĕ. Ыран – çула! Анчах та билетсене алла илмен-ха... Шыва кĕмелли ăптăркаптăр туянмашкăн тесе хулана тухсан çула май турфирмăна кĕтĕмĕр. Ара, ыран Мускавран вĕçмелле вĕт. Вăт хайхи ăнланмалла мар çак сăмахпа кĕтсе илчĕç те пире унта: ОВЕРБУКИНГ... Мĕнпе пуçса çимелле тет ăна??? Халĕ унăн пĕлтерĕшне питĕ лайăх ăнланатăп. Турист, нумай чухне пĕр-пĕр туроператор урлă, хăна çуртĕнче номер саккас парать, укçине тӳлесе хурать. Патне çитсен вара ăна... унта вырăн çуккине калаççĕ. Мĕнле капла? Укçине тӳленĕ-çке? Хăна çурчĕ пĕр вырăна темиçе бронь те йышăнасси йăлара-мĕн – тен, пĕрин мĕн те пулин сиксе тухĕ те килеймĕ... Вăт эпир те çавăн пек лару-тăрăва çаклантăмăр. Туроператорсем пĕрин хыççăн тепри панкрута тухса пынă вăхăтра вĕсен пулăшăвĕпе усă курса чикĕ леш енне каясси капла та теветкеллĕччĕ-ха. Кунта вара тата урăхларах амак... Мĕн тумалла ĕнтĕ халь? Аллă пине çунтарса ямалла-и?! Сехре самаях хăпрĕ. Юрать сăмахĕ кăна хăрушă-мĕн, лару-тăрăвĕ – аплах мар. Овербукинг /кур-ха, сăмахне калама та хăнăхрăм/ тĕрлĕ меслет сĕнет: е çав шайри, анчах та урăх отеле суйлама пултаратăр, е пачах та урăх çĕр-шыва. Нимĕн те тивĕçтермесен укçăра йăлтах тавăрса парĕç. Юлашки хыпара илтсен кăштах чун кĕчĕ темелле. Юн чупма пуçланипе пите тинех хĕрлĕ тĕс çапрĕ. Анчах та пире пĕр варианчĕ те тивĕçтермест! Урăх отеле каяс килмест: Агадирта пĕртен пĕр çак хăна çуртĕнче кăна аниматорсем – вăхăта хаваслă ирттерме пулăшса тĕрлĕ вăйă-конкурс йĕркелекенсем – пур. Урăх çĕр те илĕртмест – ара, пире каллех Египет та Турци сĕнеççĕ. Ĕнтĕ укçана та каялла илес килмест! Ăçта та пулин пур пĕр каяс килет-çке, кунта вара – акци. Тавлашсан-тавлашсан "консенсус-компромисс" тупрăмăрах. Ниçта та мар, çак отелех каятпăр. Анчах та – шăп тепĕр эрнерен. Акци вăхăчĕ иртет-и? Темех мар, уйрăмлăхне туроператор саплаштарать – овербукингшăн нихăçан та турист айăплă мар. Фу-у-у... Аса илсен çамка çине тар тухрĕ...

Малтанах хăраса пĕтнĕччĕ. Тĕрĕсех калаççĕ, кирек мĕнле медалĕн те тепĕр енĕ те пур: хайхи шăпах çавна пула çула эрне каярах тухма тиврĕ. Пирĕн хĕр пĕрчи вара шăпах ăна пула туйра та ура хуçсах ташласа ĕлкĕрчĕ, канма та кăмăлпах пуçтарăнчĕ.

**СĂМАХ МАЙ. Овербукинг аллă çул каялла Америка авиакомпанийĕсене пула çуралнă теççĕ. Сăлтавĕ – хыт кукарлăх тата айванлăх. Самолетсене ĕлкĕреймен пассажирсене укçа-тенке каялла тавăрса парас килменнипе маркетинг çак меслетне шухăшласа тупнă та вĕсем. Каярахпа ку стратеги машинăсем арендăна паракансене те, шыв тăрăх çула тухассине йĕркелекенсене те килĕшсе кайнă. Унтан ăна отельсен хуçисем ярса илнĕ.**

**Раççей тата СССР тытăмне кĕнĕ çĕр-шывсен пур турисчĕ те çак инкеке лекме пултарать. Анăç вара ку енĕпе пирĕнтен малта пырать. Европа туроператорĕсем хăна çурчĕсене хăйсен килĕшĕвĕсене алă пусма сĕнеççĕ. Кун пек чухне туризм пуянĕсене тур сыхлатăр хайхи овербукингран! Штраф тӳлесе çитереймĕç! Раççей туроператорĕсем вара отельсем сĕнекен килĕшӳсене алă пусаççĕ. Хайхи пĕр номере икĕ çынна сутнă, вырăна вара иккĕш те пырса çитнĕ пулсан кама урăх номер шырама сĕнĕç тетĕр? Ан та иккĕленĕр – Европа турисчĕ енне вĕсем сывлама та хăраççĕ, мĕншĕн тесен унăн ирĕкне туроператор юрисчĕсем куç шăрçи пек сыхлаççĕ. Хăвăршăн та пит шикленсех ӳкме кирлĕ мар – кун пек лару-тăрура отеле туроператор урлă мар, тӳрременĕх пыракан туристсем чи малтан шар кураççĕ.**

## Ыйхăпа кĕрешсе

Куçăхтарас мар тесе ăçта пуçтарăннине никама та каламанччĕ, кур-ха, пур пĕр пуçламăшĕнчех такăнмалла пулчĕ. Йĕркеллĕ çаврăнса килмелле пултăрахчĕ. Интернет урлă çула май тупăннă машинăна ларса Мускава вĕçтертĕмĕр. Вăрăм çул хăйшĕн кăткăс маррине ĕнентерме тăрăшрĕ водитель. Мускавра ĕçлекенскер кашни эрнерех Шупашкара таврăнать-мĕн. Мĕнех, питĕ аван. Пăртак тĕлĕнмеллерех çын пек туйăнчĕ-ха та ĕнтĕ хăй... Хула варринчи заправкăра хула хĕрринчи заправкăна çитмелĕх бензин ячĕ. Хула хĕррринчинче – тата тепĕр заправкăна çитмелĕх... Юрĕ, пĕр тĕлĕнтермĕшсĕр çын хăех – тĕлĕнтермĕш. Анчах та машинăна ларсанах çывăрса каймалли юрă-кĕвĕ ячĕ хайхи. Эпир вара çур çĕр тĕлĕнче çула тухрăмăр. Паллах, эпир ларнă-ларманах хуп турттарма пуçларăмăр. Пушшех – кĕвви çавăн пек. Ара, водительшĕн кун пек çул йывăр мар терĕ вĕт. ...Хыçра КАМаЗ хыттăн кăшкăртнипе шарт сиксе вăранса кайрăм. Эпир çăмăл машинăпа чутах унăн урапи айне кĕрсе кайман иккен. Пирĕн водитель мĕн, çывăрать-им? Кайсан-кайсан хамăр тӳп-тӳррĕн... çул айккине вăркăнса пынине куртăм – куçа шăп çав вăхăтра уçса янăччĕ те. Юрать руле пăрса ĕлкĕрчĕ! "Эсир çывăрнипе манăн та куç хупăнать!" – кăшкăрчĕ хайхи ман çине хăйне асăрхаттарма тăрсан. Юрĕ, кăшкăртăр, ан çывăртăр кăна. Çитес çĕре чиперех çитсе ӳкесчĕ.

Мускавран тухма пĕлмен "таксист" – хăйĕнпе çапла паллаштарчĕ-çке-ха вăл – шĕкĕр хуламăр айккинче мар, варринче те пачах çӳреме пĕлмест иккен. Çынран ыйтаыйта – "Манăн навигатор пуçра", – хуравларĕ пире вăл çак хатĕр пирки каласан – кирлĕ çĕре аран çитрĕмĕр. Чи кирли – чĕррĕн. Çавăнпа та хайхи тĕлĕнтермĕш арçын: "Эпĕ сире килĕшрĕм пулсан каялла таврăннă чухне те ман патах шăнкăравлăр – Шупашкара пĕрле таврăнăпăр", – тенине кула-кула кăна хăлха çумĕпе ирттертĕмĕр.

## Каллех – Çывăх Хĕвел тухăçне

Ку таранччен "Шереметьеврăн" кăна вĕçме тӳр килнĕччĕ. Унта темиçе терминал, халăх та питĕ нумай. Хальхинче Домодедоваран каймалла. Кунта халăх ытлашши хĕвĕшмест, аэропорт та пысăках мар. Телее, билетра кăтартнă вăхăтран кăшт та тытăнса тăмасăр сывлăша хăпартăмăр. Марокко туристсене ытлашши илĕртменнине илтнĕччĕ-ха. Чăн та, самолетра хыçалти вырăнсем пушах. Эпир виçĕ çын лармалли вырăна кашни пĕрерĕн йышăнтăмăр та улпутла саркаланса кăна пытăмăр. Кăтра пĕлĕтсем çийĕпе сăпкари пек ярăнтарса пычĕ самолет. 10400 километр çӳллĕшĕнче сехетре хыçа 860 çухрăм хăварса Аладдинăн кавирĕ çинчи пекех çемçен вĕçтерчĕ Боинг-757. Сăмах май, вăл пĕр харăс борт çине 235 çынна йышăнма пултарать. "Сывă пул, Мускав! Салам, Тухăç, Марокко, Агадир!" – куç хупанки çине тăманасем килсе ларса ĕлкĕриччен мĕлтлетрĕ пуçра... 6,5 сехетрен пирĕн Африкăн çурçĕр-хĕвел анăç пайне анса лармалла. Лайăх пулсан хĕвелĕн пĕрремĕш пайăркисемпех Атлантика океанĕн хумĕсенче чăмпăлтатăпăр. Кунта хĕвел кахалли пирки вулакана Египетран /Африкăн çурçĕр пайĕнче вырнаçнă/ таврăнсанах çырса кăтартнăччĕ ĕнтĕ: васкаса тăмасть вăл, ирхи 7 сехетре те çутăлса çитмест. Каçхине вара часрах тусем хыçĕпе хумсем айне пытанма хыпаланать. Шыв тенĕрен, вăл кунта ăшах маррине те малтанах асăрхаттарчĕç. Анчах та пире ку та хăратмасть, юхса выртакан Атăл тин сунă сĕт пек ăшăлăхĕпе савăнтарманнине хăнăхнă ĕнтĕ.

Чăн та, ăшă кăмăлĕпе палăрмарĕ Атлантика. Çитнĕ кун шыв хĕррине пыма та шиклентĕмĕр – серфингшăн кăна юрăхлă, çынран та çӳллĕ хумсем çиллессĕн тулларĕç çырана. Иккĕмĕш кун урана йĕпетмелĕх хăюлăх çитрĕ çапах та. Шывĕ-ĕ! Си-ивĕ!!! Виççĕмĕш кун вара пурин çине те алă султăмăр та хумсемпе кĕрешме кĕрсе кайрăмăр. Пуç урлах хупласа та пăхрĕ вăл. Эпир пур пĕр çыран хĕррине тухманнине кура вĕчĕрхеннипе çапса та чикелентерчĕ. Шыв темерĕн – кăмăлĕ хăйĕн тата самантрах улшăнать: çавăнтах пырса ăшшăн лăпкать, кăтăкласа та пăхать. Кĕрешсе ывăнса çитсе çыран еннелле çаврăнсан тытса чарас пек хыççăн хăвалать. Пĕр хум хыççăн тепри хăваласа çитсе темĕн пăшăлтатать, ачашласа çупăрлать, ытамне илет, хăй ытла кăтăрса кайнишĕн каçару ыйтать. Çакăн хыççăн лăпкăн кăна каялла васкать... Пĕлет-ха та: ыран каллех килетпĕр... Атлантика пĕр канмасăр ĕçлет. Тепĕр ирхине океан хĕррине çитрĕмĕр те утатпăр-утатпăр... Мĕн амакĕ? Шыв талăкра питĕ вăйлă выляса тăрать-мĕн – ир енне чакать, каç енне каялла тулать. Кунĕпе 100 /!/ метра яхăн унталла-кунталла куçать шыв.



● СЕРФИНГИСТСЕНЕ СТАТЬЯ АВТОРĔ ĂМСАНСА КĂНА СĂНАНИНЕ ВУЛАКАН ĂНЛАНЧĔ-ТĔР: ХУМ ÇИНЧЕ ТЫТĂНСА ТĂМАШКĂН ЯТАРЛАСА ВĔРЕНМЕЛЛЕ.

**Çурçĕр-хĕвел анăç Африкăра тата мĕн курса çӳренисене çитес номерте çырса кăтартма Рита АРТИ шантарать.**

ÇĂЛТĂРПА ПĔРЛЕ

# Ватти-вĕтти – зарядкăна




Пĕрлехи зарядка ирттересси пирĕн республикăра йăлана кĕнĕ ĕнтĕ. Аса илтеретпĕр: «Ирхи зарядкăна» республикăн тĕп хулинче пуçласа 2011 çулта ирттернĕ. 2013 çулта çурла уйăхĕн 18-мĕшĕнче «çăлтăрпа» тунă зарядка «Чи массăлла ирхи зарядка» категорире Раççей тата Европа рекорчĕн официаллă статусне тивĕçнĕ. Шупашкар хулин кунĕнче иртнĕ мероприятие ун чухне 28250 çын хутшăннăччĕ. 2013 çулти зарядкăна паллă актер, Виктор Логинов /халăхра Гена Букин пек паллă/ телеертÿçĕ хутшăннăччĕ. Хальхинче Шупашкарсемпе Раççей телекуравĕн паллă, сумлă спорт комментаторĕсенчен пĕри Дмитрий Губерниев зарядка ирттерчĕ. 2007 çулта вăл интереслĕ репортажсемшĕн Раççей наци телекуравĕн ТЭФИ премине тивĕçнĕ.

«Шупашкар паян – спорт хули, Раççей вара – мăнаçлă спорт çĕр-шывĕ. Чăваш Республикин тĕп хулине паян Раççей вăйлă спорт çĕр-шывĕ пултăр тесе нумай вăй хунă Олимп чемпионĕсем, паллă спортсменсем килнĕ. Спорт уявĕпе сире пурсăра та!» – терĕ Дмитрий Губерниев сывă пурнăç йĕркине пăхăнакансене саламланă май. Вăл пухăннисене ирхи зарядкăна паян кăна мар, кашни кун тума, харпăр хăй сывлăхĕпе спорт пирки кашни минутра асра тытма сунчĕ. Зарядкăна хутшăнакансене çавăн пекех Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев тата Шупашкар мэрĕ Леонид Черкесов саламларĕç. «Ырă ир пултăр сире, Шупашкарсем, пирĕн хаклă хăнасем! Сире, спортпа туслă çынсене, саламлатăп! Яланах сывă пурнăç йĕркине пăхăнăр, хăвăрпа пĕрле ыттисене те çак çул çине тăма пулăшăр. Спортпа туслисен йышĕ çулран-çул нумайланса пытăр. Юлашки вăхăтра эпир республикăра спорт юхăмĕ аталантăр тесе нумай вăй хуратпăр. Сире тухăçлă, пĕлтерĕшлĕ çак ĕçе хутшăннăшăн тав тăватăп. Шанатăп: Олимп чемпионĕсемпе призерĕсем тата та тухĕç Чăваш Енрен. Сывă пултăр спортпа туслă Раççей! Сывă пултăр спортпа туслă Чăваш Ен!» – çĕкленÿллĕ кăмăлне пытармарĕ Михаил Васильевич.

Шупашкарти Хĕрлĕ тÿремре республикăри фитнес-аэробика федерацийĕн президенчĕпе Оксана Вербинăпа спорт шкулĕнче вĕренекенсем ертсе пынипе республика влаç органĕсен ĕçченĕсем, хулари предприяти-организацире вăй хуракансем, студентсемпе шкул ачисем, спорт ветеранĕсем, сывă пурнăç йĕркине пăхăнакансем – зарядка турĕç.



* * *

**«Раççей – спорт çĕр-шывĕ» форума халалланă курăмлă тепĕр пулăм вăл – Спортсменсен парачĕ. Ăна Раççей телеканалĕн ĕçченĕ Дмитрий Губерниев ертсе пычĕ.**

Парада Олимп, тĕнче тата Раççей чемпионĕсем хутшăнчĕç. Вĕсем Раççей Федерацийĕн, Чăваш Ен тата Шупашкар хулин ялавĕсене йăтса иртрĕç. Уява килнисене тĕп хула пуçлăхĕ Леонид Черкесов саламларĕ. «Эпир хамăрăн хулапа, спортсменсемпе тата ачасемпе мăнаçланатпăр. Пурне те ăнăçу сунатăп», – терĕ вăл.

Нумай йышлă ушкăна Олимпиада-80 символĕ Упа, хăвăрт утакансен 2008 çулта Шупашкарта иртнĕ Тĕнче кубокĕн палли Кăвакал чĕппи, çăмăл атлетика енĕпе 2015 çулта ирттерме йышăннă Европа чемпионачĕн талисманĕ Çĕлтĕр ертсе пычĕç. Хĕрлĕ тÿремпе пĕрин хыççăн тепри Чăваш Енри паллă спортсменсем, тренерсем, спортăн тĕрлĕ федерацийĕпе ассоциацийĕн представителĕсем, спорт шкулĕсенче ăсталăхне туптакансем, ветерансем утса иртрĕç. Самбо, дзюдо, бокс, футбол, тхеквандо, гимнастика, хоккей, ташă тата ытти пĕрлĕхе çÿрекенсем хăйсен пултарулăхĕпе паллаштарчĕç.

Ялав йăтнă çамрăксем, оркестрсем, хор, юрăçсемпе ташăçсем уяв кăмăлне çĕклерĕç.

# Хускану сывлăха çирĕплетет

**Ĕнер Чăваш Енĕн тĕп хулинче Пĕтĕм тĕнчери утакансен кунĕ старт илчĕ. Кун йышши пулăм Раççейре – пĕрремĕш хут. Акцие тĕнчери 150 çĕр-шывра "Спорт пурин валли те" ассоциаци /TAFISA/ пулăшнипе 1991 çултанпа йĕркелеççĕ. Пĕтĕмпе унта халĕччен 12 млн ытла çын хутшăннă. Мероприяти тĕллевĕ – куллен физкультура тăвассине йăлана кĕртесси, халăхра спорт тата сывă пурнăç йĕркин сумне ÿстересси.**

Спорт уявне пухăннисене Раççей Федерацийĕн Правительствин Председателĕн çумĕ Аркадий Дворкович саламласа ырă сунчĕ.

РФ Олимп комитечĕн президенчĕ Александр Жуков "спортри çитĕнÿ пĕчĕк утăмран – кулленхи физкультура занятийĕсенчен – пуçланнине" палăртрĕ. "Утакансен кунне хутшăнма çакăн чухлĕ çын пухăнни кăмăла çĕклет. Сочири Олимп вăййисем хыççăн пирĕн çĕр-шыв çыннисем спорт енне ытларах туртăна пуçларĕç", – терĕ вăл.



TAFISA президенчĕ Джо-Хо Чанг профессор Раççейре Утакансен кунне çапла анлă паллă туни тĕлĕнтернине пĕлтерчĕ. Спорт уявне пухăннисене çавăн пекех Чăваш Республикин Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев, ЧР Патшалăх Канашĕн Председателĕ Юрий Попов, Шупашкар хула пуçлăхĕ Леонид Черкесов саламларĕç.

Пĕтĕм тĕнчери утакансен кунĕ, Шупашкарпа пĕр харăсах, Раççейри темиçе хулара – Сочире, Красноярскра, Белградра, Чĕмпĕрте – старт илчĕ. Çакна регионсемпе телекĕперпе çыхăнса йĕркелеме май килчĕ. Çак кун Шупашкар заливĕн çыранĕ тăрăх 15 пин ытла çын утса çаврăнчĕ. Çак йышра – Олимп тÿпине çĕкленнĕ спортсменсем, çитĕнÿсем патне ăнтăлакан çамрăксем, ватăсем, ача-пăча... Вĕсене пĕрлештерекенни – çирĕп сывлăхлă пулас килни.

* * *

**Шупашкарти «Спартак» физкультурăпа сывлăха çирĕплетмелли комплексăн стадионĕнче Пĕтĕм Раççейри «Ĕçпе хÿтĕлеве хатĕр» /ГТО/ физкультурăпа спорт комплексĕн нормативĕсене йышăнмалли пĕрлехи кун иртрĕ.**

Ку нормативсене пурнăçлас тĕллевпе тĕрлĕ ÿсĕмри – 11 ушкăнри – 1000-е яхăн çын килнĕ.

Спорт уявне Раççей Геройĕ, виçĕ хут Олимп чемпионĕ, кĕрешÿçĕ, РФ Патшалăх Думин депутачĕ Александр Карелин, Раççей боксерĕ, тĕнче чемпионĕ, РФ Патшалăх Думин депутачĕ Николай Валуев, Олимп чемпионĕ Игорь Лавров килсе çитрĕç.




«Ку енĕпе Чăваш Ен – лидерсенчен пĕри. Ахальтен мар ĕнтĕ эпир ГТО нормативĕсене йышăнмалли пĕрлехи куна шăпах кунта ирттеретпĕр», – терĕ Павел Колобков.

Николай Валуев çамрăк спортсменсене акă мĕн сунчĕ: «Хăвăр ума тĕллев лартăр, çапах çул варрине çитсен ан чарăнăр. Тĕллеве нумай ĕçлесен çеç пурнăçлама май килет».

Сăмах май, Николай Валуев /вăл 2,13 см çÿллĕш/ Чăваш Енре пĕрремĕш хут хăйĕнчен çÿллĕрех çынпа тĕл пулнине пĕлтернĕ. Каччă, хушамачĕ паллă мар, "Шупашкар хурчкисем" баскетбол командин членĕ.

ПАЛЛĂ ÇЫНСЕМ – ЧĂВАШ ЕН ÇИНЧЕН



**Раççей президенчĕ Владимир ПУТИН:**

"Ку мероприятие /Тĕнче шайĕнчи "Раççей – спорт çĕр-шывĕ" форум/ Раççей Федерацийĕн регионĕсенчен пĕринче ирттерме кăмăллă. Паян кунта ирхине спорт массăллă мероприятийĕ иртнине пĕлетĕп – Утакансен кунне йĕркелесси тĕнчере тахçанах вăй илнĕ. Эпĕ пĕлнĕ тăрăх, эпир ăна ку таранччен ирттермен. Ăна шăпах кунта йĕркелени питĕ пĕлтерĕшлĕ – республика хăвăрт утакансен енĕпе тахçанах чапа тухнă. Çакăн пек шкул пурришĕн пирĕн савăнмалла кăна.

Республикăра /Чăваш Енре/ юлашки 20 çулта ача çураласси чакса пыратчĕ. 20 çул! Юлашки 3 çулта вара ку кăтарту ÿсме пуçларĕ – çирĕппĕн. /.../ Паллах, ку енĕпе спортпа физкультурăна аталантарни те ырă витĕм кÿнĕ".

**Раççей Федерацийĕн спорт министрĕ Виталий МУТКО:**

"Спорт объекчĕсем. Паян эсир Шупашкарта çакна куратăр – вĕсем спортпа туслашмалли меслетсем кăна мар, вĕсем хулана аталантаракан социаллă объектсем. Кун пек объектсене çĕклени пурнăç пахалăхне лайăхлатать, сывлăш варкăшне пачах улăштарать.

Тĕнче шайĕнчи форума ирттермешкĕн Чăваш Ене ăнсăртран суйламан. Юлашки çулсенче республика хăвatлăн малалла аталанать. Кунта

# Тěнче спортне пысăк улшăнусем кěтеççě





«Раççей – спорт çěр-шывě» форумăн иккěмěш кунě вěçленнě май РФ спорт министрě Виталий Мутко тата ЧР Пуçлăхě Михаил Игнатьев журналистсем валли пресс-конференци ирттерчěç. Шел те, вăхăт хěсěккине кура массăллă информаци хатěрěсен представителěсен нумай ыйтăвне хуравлаймарěç, çапах вěсен сăмахěнче форум пěтěмлетěвě туллин янăрарě темелле.

Виталий Мутко палăртнă тăрăх – форума массăллă информаци хатěрěсен 150 ытла представителě çутатнă, хăнасен шучě – 3 пин çын ытла. Чăннипех сумлă вěт. Малашне форума икě çулта пěрре ирттерме йышăннă, вăл спорт аталанăвěн ыйтăвěсене, унăн çěр-шыв пурнăçěнчи пěлтерěшне сўтсе явмалли тěп площадка пулса тăрě. Çак кунсенче Чăваш Енре форум программипе килěшўллěн тěрлě 18 мероприяти иртнě. Тěп вырăнта, паллах, Раççей Президенчě çумěнчи Физкультурăпа спорта аталантарас енěпе ěçлекен канаш ларăвě.

– Ăна Владимир Путин Президент ертсе пычě, ларура спортăн истори шайěнчи тапхăрне пěтěмлетрěмěр, – терě министр. – Çав тапхăр 2006 çултан пуçланчě, ун чухне пирвайхи программăна йышăннă, çěр-шыв спорта таврăнчě. Ку тапхăра 2015 çулта вěçлетпěр.

Спорт общественноçě Чăваш Енре пухăннă май тěрлě ыйтăва тишкернě, хаклaнă, аталану çул-йěрěсене палăртнă. Çав шутра – ГТО комплексě. Виталий Леонтьевич пытармарě: çак комплекс халăхăн пысăк пайěшěн норма пулса тăмалла. Çитес çулах пěтěм шкулпа аслă вěренў заведенийěнче ГТО нормативěсене пурнăçламалла, 2017 çултан тытăнса вара – пěтěм çěр-шывěпе.

Виталий Мутко форума ирттерме Чăваш Ене ăнсăртран суйласа илменнине палăртрě. Михаил Игнатьева, республика Правительствине хăнасене тараваt йышăннăшăн, йěркелў ěçне лайăх пурнăçланăшăн тав турě. Çапах кунта пухăнас тени чи малтанах Чăваш Енěн спортпа çыхăннă кăтартăвěсем лайăххипе сăлтавланнă.

Виталий Леонтьевич кунти лаша спорчěн манежне уçма хутшăннă та – çакăн çинчен кăмăллăн каласа пачě. Лаша спорчěн шкулěнче конкур енěпе çине тăрса ěçлěç, вăл вара – спортăн Олимп тěсě. «Унта вěренекенсем 14-15 çулсенче кăна, анчах мана паллаштарчěç те – пěри халех спорт мастерěн кандидачě, теприсен те – 1, 2-мěш разрядсем!» – тěлěнерех каларě вăл. Апла тăк Чăваш Енěн малашне ку енěпе палăрмалли майсем пулěç. Виталий Мутко шантарсах каларě: маунтинбайк комплексне те, Пăр керменне те туса пětерěпěр. Чăваш Енре спортăн 12 тěсне çине тăрсах аталантарнă май вăл çěр-шывăн пěрлештернě командисен йышěнче Чăваш Ен яшěсемпе хěрěсем пуласси пирки иккěленмест.

Шупашкар сумлă спорт ăмăртăвěсене ирттерес енěпе пысăк опыт пухни пирки те сăмах пулчě. Çав шутра – çăмăл атлетика чемпионачěсем. Кěçех вара çак енěпех Европа Кубокě иртмелле. «Михаил Васильевича ўкěтлерěм: чемпионатра пирěн команда çěнтерессишěн те эсě яваплă пулатăн. Яваплăха ун çине тиесшěнччě. Çук, килěшмерě, ăмăртусене йěркелесе ирттеретпěр, анчах кăтартусемшěн хăвăр явап тытăр терě», – шўтлерě министр. 16, 18-мěш çулсенче хăвăрт утакансен чемпионачěсене ирттермелле – каллех Шупашкарта.

Михаил Игнатьев форума Чăваш Енре ирттерни республикăшăн пысăк чыс пулнине палăртрě, куншăн Владимир Путин Президента, Виталий Мутко министра тав турě. Ютран килнě журналистсем те чылайăн, çавна май вăл республика çинчен кěскен каласа пани, паллах, ытлашши пулмарě. Халăхăн 36% спортпа туслă, спорт шкулěсене 31 пин ачапа çамрăк çўрет. Çакăн витěмě виççěмěш çул ěнтě Чăваш Енре ача çуратас енěпе палăракан ўсěмре курăнать, çынсен пурнăç тăршшě пысăкланать.

Журналистсен ыйтăвěсене хуравланă май Виталий Мутко çитес çулсенче спорт резервне хатěрлес енěпе çине тăрса ěçлессине палăртрě. «Кăтартусем халě те япăх мар, пирěн ачасемпе çамрăксем пур енěпе те çěнтерессě, пирěнпе Китай кăна тупăшаять. Апла пулин те ку енěпе ěçлемелле те ěçлемелле-ха», – терě вăл. Хальлěхе, сăмахран, шкулсен 30% кăна хăйсен спорт бази пур. Вěренў заведенийěсем спорт площадкисемпе залěсене унта та кунта арендăна илсе йывăрлăхран тухни ăна тивěçтермест. Çавăн пекех кадрсем тěлěшпе ыйтусем пур: хăйсен ěçне пěлекен, çěнěлле ěçлекен ăста тренерсем кирлě. Çакăн валли патшалăх укçа уйăрě.

2018 çулта Раççейре иртекен футбол чемпионачě пирки каланă май министр ют çěр-шывсенчен килекен командăсене çирěм регион йышăнассине пěлтерчě. Пěр команда Шупашкарта тěпленě. «Хăш командине суйласси пирки сăмах пуçарсан Михаил Васильевича эпě голландецсене йышăнма сěнтěм – пěрле туртса яратăр терěм, – каллех шўтлерě Виталий Леонтьевич. – Çук, Гана командине йышăнас килет» тет. Паллах, шўтлетěп, командăсем хăш регионта пулассине хăйсем суйласа илěç».

«Туртса ярассипе» çыхăннă темăна малалла тăснă май министр Чăваш Ен Пуçлăхě республикăра шкулсен, социаллă учрежденисен директорěсене табак туртма пăрахтарни пирки кулкаласа сăмах пуçарчě: «Питě демократиллě...» Апла пулин те унăн сăмахěнче республика влаçěн çак утăмне ырлани куç кěрет сисěнчě.

Журналистсем тěнче шайěнчи спорт организацийěсен йышне Раççей представителěсене ытларах кěртме сěннине те министр шўтлесе хуравларě: «Чапаев» фильма ас тăватăр-и? Петька командир çара ертсе пыма пултарассине кăсăкланать. «Пултаратăп, анчах чěлхе пěлместěп», – тет Чапаев. Шўт-ха ěнтě, чăннипе вара çакă та чăрмантарать. Апла пулин те Пěтěм тěнчери фехтовани тата шахмат федерацийěсен президенчěсем – пирěн çынсем, Усмановпа Илюмжинов. МОКăн тăватă членě – Раççей çыннисем. Ытти организацие те пирěн представительсем пур. Анчах кунта ěçě шутěнче мар, пахалăхра. Тěнче спорчě паян пысăк улшăнусен умěнче. Сумлă форумсем ирттерме. Пирěн çав улшăнусене асăрхамасăр юласран сыхланмалла».

Форумран республикăшăн мěнле еткер юлать? «Эпир мěн илсе килнě – пěтěмпех юлать», – пулчě хурав. Ку çеç те мар. Виталий Мутко шухăшěпе – региона çěр-шыв Президенчě килни питě пысăк пěлтерěшлě. Эппин, Чăваш Енпе кăсăкланаççě. Çакă республикăра пурăнакансен кăмăлне те витěм кўрет, хăйсене ытларах хисеплеме пулăшать.

**Николай КОНОВАЛОВ.**

Геннадий ВЕРБЛЮДОВ сăн ўкерчěкěсем.

**Пěтěм тěнчери «Раççей – спорт çěр-шывě» спорт форумне хутшăнакан хисеплě хăнасем!**

**Сире асаттесен йăлисене, пуян та хăйне евěрлě наци культурине, пурнăçăн йăлана кěнě йěркине тирпейлě упракан, 128 национальноç тата 7 этнос ушкăнěн представителěсем килěштерсе, туслă пурăнакан пархатарлă чăваш çěрě çинче чун-чěререн саламлатăп.**

**Пирěн патшалăх политикин тěп тěллевěсем – наци сывлăхне çирěплетесси, ача çуратассине, пурнăç тăршшěне ўстермешкěн ырă условисем йěркелесси. Çак политикăна пурнăçламалли чи меллě инструментсенчен пěри – массăллă физкультурăпа спорт, сывă пурнăç йěркипе сывă апатлану пропаганди.**

**Республикăра спортпа физкультура кашни çыннăн пурнăçěн пěр пайě пулса тăтăр тесе меллě условисем йěркелетпěр. Юлашки çулсенче 50 ытла спорт объектне реконструкциленě, яллă мěн пур районта çěнě йышши физкультурăпа спорт комплексěсене хута янă, стадионсене, шкулсен спорт залěсене çěнететпěр, хуласен урамěсенче тата нумай хваттерлě çуртсен картишěсенче тренажер комплексěсем вырнаçтарнă, çакă тěрлě ўсěмри мěн пур çынна спортпа сывăхланма май парать. Ăнсăртран мар ěнтě Шупашкар кăçал Пěтěм Раççейри пенсионерсен I Спартакиадине йышăнчě.**

**Çěнě йышши спорт бази Чăваш Ене тěрлě шайри ăмăртусене йышăнма май парать. 2013 çулта кăна республикăра 1700 ытла спорт ăмăртăвě иртнě, вěсене 280 пин çын ытла хутшăннă.**

**Халăх массăллă спорт акцийěсене хапăл тăвать. 2013 çулта Шупашкарта «Сăлтăрпа пěрле ирттернě зарядка» 30 пине яхăн çынна пухрě, Раççейпе Европăн Рекордсен кěнекине кěчě, Чăваш Республики вара çултаlăк кăтартăвěсем тăрăх Раççей Правительствин спорт енěпе паракан наци премине тивěçрě.**

**Ачасен физвоспитанине лайăхлатас енěпе уйрăмах тимлě ěçлетпěр. 2011 çулта спорт шкулěсен пурлăхпа техника базине çирěплетес тěллевпе Чăваш Енри хуласемпе районсенче тунă физкультурăпа спорт комплексěсен пурлăхне вěсен балансне куçартмăр. Çак йышăну ФСКсемпе усă курассин тухăçлăхне палăрмаллах ўстерме, ачасемпе çамрăксен спорт шкулěсенчи занятисем ирттермелли условисене лайăхлатма май пачě. Кăтартăвě куç кěрет: республикăри спорт шкулěсене çўрекенсен тўпи 2010 çулхи 19,5 процентран 2013 çулта 24 процент таран ўсрě, çав вăхăтрах мастер тата разрядник спортсменсене хатěрлесси икě хут пысăкланчě /2010 çулта – 475, 2013 çулта – 964 çын/.**

**Шансах тăратăп: Пěтěм тěнчери V «Раççей – спорт çěр-шывě» спорт форумě çынсем спорта юратассине малалла аталантарма пулăшě, сывă пурнăç йěркине тытса пыракансемшěн ăс-хакăлпа вăй-хăват енěпе çěнě çитěнўсем тума хавхалантарě.**

**Форума хутшăнакансене пурне те ěçре ăнăçу, çěкленўллě кăмăл-туйăм тата спортра çěнě çěнтерўсем сунатăп!**

**Михаил ИГНАТЬЕВ,**
**Чăваш Республикин Пуçлăхě.**



пурлăх бази лайăхланать, спортпа туслисен йышě ўсет. Физкультурăпа спорт массăллă мероприятийěсене йěркелесе ирттермешкěн çěнě технологисемпе питě нумай усă кураççě. /.../ Чи пěлтерěшли – юлашки çулсенче республикăра тăтăшах спорт пысăк форумěсемпе турнирсем иртеççě. Çавăнпа та Владимир Владимирович Путин "Раççей – спорт çěр-шывě" форума Шупашкарта ирттерме палăртрě".

**Валентин БАЛАХНИЧЕВ,**
**Пěтěм Раççейри çăмăл атлетика федерацийěн президенчě:**

"Чăваш Енре массăллă тата профессионал спорта пысăк вырăн уйăрни савăнтарать. Кунта Атăл тăрăхěнчи кăна мар, Раççейри чи лайăх спорт сооруженийěсене çěклеççě. Чăваш Республикинче Раççейěн пěрлештернě командин лидерěсем тренировкăсем ирттерме кăмăлласçě. Ахальтен мар ěнтě Чăваш Енěн тěп хулинче 2015 çулта çăмăл атлетика енěпе Европа Кубокне ирттерме палăртнă".





АПАЧĔ ТУТЛĂ ПУЛТĂР

### Баклажанпа чăх хăпартăвĕ



**Баклажан, спагетти, сухан, чăх фаршĕ, тăварпа пăрăç кирлĕ.**

**Çиелтан яма 3 çăмарта, 200 грамм хăйма, 250 миллилитр сĕт, 100 грамм сыр хатĕрлемелле.**

Баклажана – тăваткалласа, сухана вĕттĕн турамалла. Çимĕçсене сийлесе /баклажан – спагетти – сухан – чăх фаршĕ – спагетти/ хумалла. Тăварпа пăрăç сапма манмалла мар.

Çăмартана хăймапа, сĕтпе пăтратмалла. Çак хутăша çиелтен ямалла. Унтан сыр теркăламалла. Хăпартăва духовкăра 1 сехет пĕçермелле.

### "Баунти" торт

**Чуста çăрма 250 грамм маргарин, 2/3 стакан сахăр, 200 грамм çăнăх, 1 чей кашăкĕ апат соди, 4 çăмарта, 4 апат кашăкĕ сĕт, 3 апат кашăкĕ какао, ванилин кирлĕ.**

**Ăшне хума 500 миллилитр сĕт, 6 апат кашăкĕ манна кĕрпи, 200 грамм услам çу, 2/3 стакан сахăр, 200 грамм кокос хăрпăкĕ хатĕрлемелле.**

Услам çăва сахăрпа пăтратмалла, пĕрер çăмарта хушмалла, ытти çимĕçе ямалла. Чустана çатмана тултарса духовкăна лартмалла. Пиçсен 2 пая касмалла.

Сĕте çупа, манна кĕрпипе пăтратса вăйсăр çулăм çине лартмалла. Çăраличчен пĕçермелле, сахăр, кокос хăрпăкĕ хушмалла.

Пашалун пĕр пайне хумалла. Кокос хутăшĕ сармалла. Ăна тепĕр пашалупа витмелле. Çиелтен ирĕлтернĕ шăккалат ямалла. Торта сивĕтмĕше лартмалла.

### Банан икерчи

**2 банан, 1 стакан сахăр, 1/2 стакан çăнăх, 1/4 стакан сĕт, 1 çăмарта, 2 апат кашăкĕ тип çу кирлĕ.**

Банана, çăмартана, сĕте, сахăра миксерпа пăтратмалла, çăнăх хушмалла. Çак хутăша кашăкпа ăсса тип çу сĕрнĕ çатмана ямалла. Икĕ енчен ăшаламалла.



### Батонри пицца

**Батон, 4 помидор, 200 грамм кăлпасси, 100 грамм сыр, майонез, услам çу, петрушкăпа укроп кирлĕ.**

Батона 5-7 сантиметр хулăнăш касмалла. Çемçе пайне кăларса тĕпне хăвармалла.

Кăлпассипе помидора тăваткалласа турамалла. Касăк тĕпне услам çу хумалла. Унтан кăлпассипе помидор ямалла. Вĕтетнĕ укроппа петрушка сапмалла, сыр теркăламалла. Духовкăра пĕçермелле.

### Çĕр улмипе кăмпа кукăлĕ

**Чуста çăрма 300 грамм çăнăх, 150 грамм маргарин, 2 çăмарта, чĕптĕм тăвар кирлĕ.**

**Ăшне хума 200-300 грамм кăмпа, 3 çĕр улми, пуçлă 1 сухан, 250 грамм хăйма, 100 грамм сĕт, 2 çăмарта, 3 апат кашăкĕ çăнăх, тăвар, пăрăç хатĕрлемелле.**

Çемçе маргарина тăварпа, кăпăклантарнă çăмартапа, çăнăхпа пăтратса чуста çăрмалла. Çур сехетлĕхе сивĕтмĕше лартмалла.

Суханпа кăмпана ăшаламалла. Пĕрчĕлесе туранă çĕр улмине çурма пиçиччен вĕретмелле.

Çăмартапа хăймана, сĕте, тăварпа çăнăхпа уйрăм савăтра пăтратмалла.

Йĕтĕрленĕ чустана çатмана хумалла, айккине хăпартмалла. Тĕпне çĕр улми, ун çине кăмпапа сухан хумалла. Çиелтен çăмарта хутăшĕ ямалла. Кукăле духовкăра 1 сехет пĕçермелле.

### Тăпăрчă кукăлĕ

**200 грамм услам çу, 1 стакан çăнăх, 1/2 чей кашăкĕ апат соди кирлĕ.**

**Ăшне хума 400 грамм тăпăрчă, 2/3 стакан сахăр, 2 çăмарта, шăккалат, 2 апат кашăкĕ крахмал хатĕрлемелле.**

Услам çăва теркăламалла, сахăр, çăнăх, апат соди хушмалла. Тĕпренекен чуста çăрмалла.

Тăпăрча сахăрпа, çăмартапа хутăштармалла, теркăланă шăккалат ямалла.

Çатма тĕпне чуста сармалла, ун çине тăпăрчă хутăшĕ хумалла. Çиелтен юлнă чустапа витмелле. Кукăле 30-40 минут пĕçермелле. Сивĕтмĕше лартсан тата тутлăланĕ вăл.

ШУТА ИЛМЕ

## Начарланмалли техĕмлĕх

**Корица**

Пылак юрататăр-и? Апла тăк ку техĕмлĕх шăпах сире валли. Вăл пылак çиес килнине пусарать. Унсăр пуçне çак техĕмлĕх япаласен ылмашăвне лайăхлатать, юнри сахăр виçине пĕр шайра тытма пулăшать.

**Ваниль**

Шăккалатсăр пурăнаймастăр-и? Пылак патне алă тăсиччен ваниль чейĕ хатĕрлĕр. Ун хыççăн шăккалат çиес килмĕ. Ваниль шăршиллĕ çуртапа та усă курма май пур.

**Пĕтнĕк**

Кăнтăрлахи апат вăхăчĕ çитиччен хырăм выçрĕ-и? Бутерброд мăнтăрлатнине асра тытăр. Пĕтнĕк туратне шăршлани вара çиес килнине ирттерет. Начарланас тесен çак техĕмлĕхрен хатĕрленĕ чей ĕçмелле мар. Каллех апат çиес килĕ.

**Чили пăрăçĕ**

Çак техĕмлĕх хушнă апата нумай çиеймĕн. Вăл япаласен ылмашăвне хăвăртлатать, çусене «çунтарать».

## Лимон – паха апат кăна мар

Эмаль е акрил ваннăна лайăх çуса тасатас тесен лимонпа усă курма пулать. 1 стакан сĕткене ваннăна сĕрмелле. Пĕр сехет тытнă хыççăн çуса ямалла.

Лимон сĕткенĕпе сăтăрсан тĕкĕр те йăлтăртатма тытăнĕ. Кĕленчене малтан сĕткенпе сирпĕтмелле, 10-15 минутран типĕ çĕтĕкпе сăтăрса якатмалла.

Вăлах унитазри хурапа бактерисене пĕтерет. Ку тĕллевпе савăта сĕткенпе тĕплĕ сĕрмелле. 15-20 минутран çуса ямалла. Унитаз çĕнĕ пекех пулĕ.



## Пахчари тунката

Пахчара тунката тăрса юлсан ăна кăклама çак сĕнӳ пулăшмалла. Тунката варрине /пысăкăшне кура/ шăтăк шăтармалла. Унта краççын тултармалла. Вăхăт иртсен вăл çăтăнса пĕтĕ, унтан татах та татах ямалла. Çителĕклĕ пек туйăнсан шăтăка савăлламалла. Пĕр-икĕ эрнерен савăла кăлармалла та тункатана хăрушсăрлăха пăхăнса чĕртмелле. Çулăм ăна тĕппипех пĕтерĕ.

Çав хушăрах тунката пахчана илем кӳме пултарнине те ан манăр. Ун çинче чечек ӳстерме те, ăна темĕн тĕрлĕ капăрлатма та пулать.

ПАХЧАÇĂ КĔТЕСĔ

## Кишĕр аванах упранать



Йывăç ешчĕк тĕпне пахча çимĕç хумалла. Ăна пăчкă кĕрпипе витмелле. Ун çине каллех кишĕр сармалла. Çапла темиçе сий хăпартмалла. Çак мелпе усă курсан пахча çимĕç çĕрмест, тутине улăштармасть. Ас тăвăр, пăчкă кĕрпине малтан типĕтмелле.

## Йывăç «куççульленсен»

Йывăç хуппи çурăлса сухăр юхма пуçланине кашниех асăрханă пуллах. Çакна пула вăл типме пуçлать. 2-3 çултанах ăна касса пăрахма тивет.

Çимĕç паракан йывăçа пăхăр купоросĕ çăлса хăварма пултарать. 30-50 грамм пăхăр купоросне 3-5 литр шывра ирĕлтермелле. Çак хутăшпа йывăçа шăвармалла. Унтан темиçе витре таса шыв ямалла. Тепĕр 3-4 кунран йывăç "куççульленме" пăрахĕ.

ВЫЛЬĂХ-ЧĔРЛĔХ

## Ĕне çилли çурăласран



Килтех маç хатĕрлеме пулать. Ăна массаж тăвиччен сĕрмелле. 300 грамм сысна çăвне 10-15 грамм прополиспа хутăштармалла. Вăйсăр çулăм çинче ирĕлтермелле. Маçе банкăна тултарса сивĕтмĕшре упрамалла.

Суса ирĕлтерсен тепĕр тĕрлĕ маçпе усă курмалла. Ирĕлтернĕ 200 грамм хуçалăх супăнне 10 грамм прополиспа хутăштармалла. Вăйсăр çулăм çине лартса илмелле. Сивĕнсен банкăна ямалла. Ăна витерех тытма юрать.

СЫВЛĂХ

## Ӳслĕкрен



Ӳсĕрме пуçласанах ачана çакнашкал сиплеме пулать. 2/3 стакан кишĕр сĕткенне 1/3 стакан пылпа, 1 апат кашăкĕ лимон сĕткенĕпе пăтратмалла. Çак хутăша куллен 4 хут 2-шер чей кашăкĕ ĕçмелле.

## Юн пусăмĕ ӳссен

1 стакан минерал шывне 1 апат кашăкĕ пыл, çур лимон сĕткенĕ ямалла. Çак хутăша апат çиийиччен ĕçмелле. 10 кун сипленмелле. Вăл çавнашкалах лăпланма, канлĕ çывăрма пулăшать.

*Халăх мелĕпе усă куриччен тухтăрпа канашламалла.*

## Юн пусăмне чакарма

Чĕре тĕртĕмĕн инфаркчĕ е инсульт çапса ан ӳкертĕр тесен ирга çимелле. Çырлана чĕрĕлле тутаннисĕр пуçне çулçипе кăчкинчен чей вĕретсе ĕçни паха.

Тĕрĕссипе, ирган çырли çеç мар, çулçипе чечекĕ те усăллă. Инфаркт е инсульт аптăратасран сыхланма кунне 3-4 кашăк çырла çини е 1 стакан сиплĕ шыв ĕçни те çителĕклĕ. Настой хатĕрлеме 1 апат кашăкĕ ирга чечекне е çулçине /çу уйăхĕнче пуçтарнине/ 1 стакан вĕри шыва ямалла та 2 сехет лартмалла. Кунне виçĕ хутчен çуршар стакан ĕçмелле. Юн пусăмĕ ӳссен, чĕрепе çыхăннă ытти чиртен 2 апат кашăкĕ çулçа 2 стакан вĕри шыва ямалла та çур сехет лартмалла. Кунне виçĕ хутчен пĕрер апат кашăкĕ ĕçмелле.

Ирга В ушкăнри витаминсемпе, органика йӳçекĕсемпе, тĕрлĕ микроэлементпа тата ытти нумай паха япалапа пуян. Унсăр пуçне çырла юн тымарĕсене çирĕплетме пулăшать, юн кĕвĕлесрен те сыхлать. Чечекĕнчен вĕретнĕ шыв юн пусăмне чакарать, сĕткенĕ чĕрепе асапланакансемшĕн усăллă.

## Лăсă – сиплевçĕ

Çур килограмм вĕтетнĕ лăсса 300 миллилитр вĕри шыва ямалла, çур сехетрен сăрăхтармалла. Лăсса марля çине хурса юн тымарĕ мăкăрăлса тухнă ал-урана çыхмалла. 15 минут тытмалла. Çак процедурăна кун сиктерсе икĕ эрне ирттермелле.

Урана çыхни çеç çителĕксĕр. Компресс тунă хушăра ятарлă шĕвек те ĕçмелле. Пĕчĕк лăсса вĕресе сивĕннĕ шыва ямалла. Лăсăпа шыв шайлашура пулмалла. Кăштах йӳçĕтме лимон сĕткенĕ хушса 20-30 минут вĕретмелле, 3 сехет лартмалла. Кунне икĕ хутчен апат хыççăн çуршар стакан ĕçмелле.

## Ура тупанĕ çурăлсан

Пĕр тан пайсемпе йод, нашатырь спирчĕ тата глицерин хутăштармалла. Çуталиччен лартмалла. Урана сунă хыççăн/вĕри шывра ислетсен тата аванрах/ çак хутăша сĕрмелле. Виççĕ сăтăрсанах ура тупанĕ якални сисĕнĕ.

## Юхан-суран иртмесен

Ал-ура çинчи вăраха кайнă юхан-сурана сиплеме халăх мелĕ пулăшать. Тилпĕрене ирĕлтернĕ услам çăва чиксе кăлармалла та суран çине хурса çыхмалла. Темиçе хутчен чĕркесен ӳт пирчеме тытăнĕ.



ТĔЛĔНТЕРЕТ...



## Хăвах манса кайăн

Тĕлĕнетĕп санран. Мĕн тупнă эсĕ манра? Пур пĕрех нихăçан та санăн пулас çуккине хăв та пĕлетĕн. Эпĕ çемьеллĕ. Пĕчĕк ывăлăмсемпе мăшăр хаклăрах маншăн. Урăх эпĕ никам пирки те шухăшлама пултараймастăп. Телефон çине пĕрмай укçа хуни те лайăх мар. Хам пуçласа çавах шăнкăравламастăп сан пата. СМС-çырусене те хуравламастăп. «Сансăр кăмăлăм кĕрхи кун пекех япăх», – тенине те ăнланаймастăп. Тепĕр тесен, мана лайăх пĕлместĕн те. Мăшăр пур çинче урăх хĕрарăм пирки шухăшлани лайăх-и? Кану кунĕсенче ăнсăртран лавккара тĕл пултăм сана. Каçа юлса сĕт туянма тухнăччĕ. Черетре эсĕ тăратăн. Апатçимĕçшĕн тўленĕ хыççăн тухса каятăн пуль тенĕччĕ. Çук, малтанах асăрхама ĕлкĕрнĕ эсĕ мана. Чечек çыххи туянтăн. Чи хитрине суйларăн. Мăшăру валли пуль терĕм. Çук, шурă кĕл чечек çыххине мана тыттартăн. «Атя вăрттăн тĕл пулма тытăнатпăр. Сансăр пурăнаймастăп», – тени ман пуçа ниепле те вырнаçаймасть. Çурт умне çити ăсатса ятăн. Сĕт илме тухнă çын чечек çыххипе килсе кĕнине кам та пулин ăнланма пултарать-и? Ахаль те кĕвĕçекен упăшка мĕн калĕ? Эсĕ кайсанах подъезд умĕнчи çўпçап купине вăркăнтартăм.

Манран аякра мар ĕçленĕрен кашни кунах куратăп сана. Лайăх çын эсĕ. Килĕшетĕн мана. Юлташсем пулса юлма хирĕç мар эпĕ. Анчах та вăрттăн тĕл пулусем – ман валли мар. Хăçан та пулин çиеле тухатех вăл. Юратнă мăшăрăн куçĕнчен епле пăхăп? Çемьене арката шухăшламастăп. Мана пуçа çухатасла савма та кирлĕ мар. Вăхăт сиплет теççĕ. Ак кăштахран хăвах манса кайăн. Тунсăху та иртĕ. Чунунта кĕрхи кун хуçаланма пăрахатех.

**НАТАША.**
Шупашкар хули.

АХ, АНЧАХ...

## «Тăваттăлла» тĕл пулу

Ялта пурăнатăп. Вĕренсе пĕтерсен атте-анне патне таврăнас килчĕ. Район центрне ĕçе çўретĕп. Çемье çавăрман-ха эпĕ, ирĕклĕ вĕçевре темелле. Хама телейлĕ туйма пĕтĕмпех пур. Каччă-и? Ялта халĕ вĕсем çукпа пĕрех. Пуррисем те, эрех-сăрапа иртĕхнине пула, хусаха юлнисем е ĕç патне ал пыманнисем. Ун пеккипе мĕн тăвас? Çапах йĕкĕт çуккипе аптăрамастăп-ха эпĕ. Хулара вĕсем темĕн чухлех. Çамрăк чухнехи тусăмсем манмаççĕ, шăнкăравласах тăраççĕ. Тунсăхлаççĕ пулинех – хăнана чĕнеççĕ.

Нумай хистеттерместĕп вĕсене. Тепĕр чухне хула сывлăшĕпе «киленме» часах вĕçтерсе çитетĕп. Акă хальхинче те тĕл пулма эрне малтан калаçса таталтăмăр та çула тухрăм. Ытла ясар теесрен асăрхаттарса хăварам: Шупашкара савнисемпе тĕл пуласси-шĕн çеç çўреместĕп, хĕр тантăшăм патне хăнана каятăп.

Тепĕр тесен яшсене шанма çук вĕт. Сăмахĕсене ним мар çилпе вĕçтереççĕ. Акă иртнинче те Якурпа курнăçмаллаччĕ. Ялан ĕçлĕскерĕн вăхăчĕ çитмерĕ – пымарĕ. Унпа тĕл пулма май килмерĕ те Çеруша шăнкăравларăм. Кирлĕ чухне телефонне тытмарĕ апăрша. Акă паян та тăватă йĕкĕт патне çитмелле. Мĕнле пулать-ха унта? Кĕркурие яланхилле шанма çук. Ун наччасра питĕ «важнăй» ĕçсем тупăнаççĕ. Ĕлĕкхи савнине Мишăна мăшăрĕ килĕнчен кăлармасан та пултарать. Суеçтерме ăстах мар вăл. Çеруш кафене илсе кайма питех шантарчĕ-ха та... Темле пулать. Сăмахне Сантăр тытсан кăна ĕнтĕ. Вăл ку енчен маттур ача пулаканччĕ.

Пуринпе те ĕç тухсан мĕн тăвас? Çапла шухăшласа пынă май вăрăм çул та кĕскелчĕ. Хулана çитнине сисмерĕм те. Кучченеç тултарнă сумккăсене йăтрăм та Наçтук патне вĕçтертĕм. Эпĕ килнишĕн тантăшăмран пита ывăлĕ савăнать. Алăкран пырса кĕрсенех мăйран çакăнать Ванюш. Аннем пĕçернĕ кăмака кукăльне килĕштерет. Пĕчĕкскерĕн кăмăлне епле тупмăн?

Кун та иртет, çĕр те çитет – манăн пĕр савни те сас памасть-ха. Яланах çапла. Ялта чухне çеç шăнкăравласа халтан яраççĕ. Атакăна хам тухрăм темелле. Телефона илсе пĕрин хыççăн теприн номерне шырама тытăнтăм.

Ытларах Якурпа тĕл пулас килет. Темшĕн килĕшет вăл мана, чунăм та ун еннелле выртать. Çук, тытмарĕ. Эппин, каллех пушă мар. Çапла, яланах ĕçлĕ. Хăйĕн мана питĕ курас килет имĕш – анчах ниепле те пушанаймасть.

Çеруш кĕтмен çĕртен яла тухса кайнă. Каçару ыйтать. Пулмарĕ кафере тутлă апатпа сăйланасси.

Миша калаçма май килнĕ чухне хăех шăнкăравлать. Ĕлĕкхи савнине ахаль çеç курса калаçассишĕн мĕншĕн çемьери лăпкăлăха аркатас? Эпĕ те, паллах, çакна ăнланатăп. Килĕнчен тухма сăлтав тупаймарĕ курăнать – унсăрăн хальччен хăй пирки систермеллеччĕ. Ăна çиллеНессĕм çук.

Черетре – Сантăр. Унра халь пĕтĕм шанчăкăм. Унсăрăн каллех каçхи Шупашкарта уçăласси пулмасть. Ак тамаша! Ку абонент çак вăхăтра калаçайманнине пĕлтерет пĕр майра.

Çапла Ванюша курнипех çырлахрăм. Ун çумĕнче канлĕ ыйха путрăм. Тепĕр кун яла таврăнтăм. Çулăмсем малаллах кайнине пĕлетĕп-ха. Çын ачипе мар, хамăнне утьăкка сиктерсе савăнмалла ĕнтĕ. Ара, каччи çук-çке. Акă каллех миçепе «тĕл пултăм» ĕнтĕ – хăшне суйламаллине те пĕлместĕп. Ыран ĕçе çитсен пурте тупăнаççĕ акă. Пĕрин хыççăн тепри шăнкăравласа хăйне тўрре кăларма тытăнать...

**НАТАЛИ.**
Комсомольски районĕ.

КУН ПЕК ТЕ ПУЛАТЬ

## Аптăраман юлташ

Манăн юлташ – сăлтавсăрах кулянса куççуль кăларакансен йышĕнчен мар. Çийĕнчех хăйне хăпартлантармалли сăлтав тупать вăл. Нумаях пулмасть унăн мăшăрĕ автомашинăпа юпана пырса çапăннă. Юратьха хăй суранланман. Транспорта вара юсаса йĕркене кĕртме пулать. Хĕр тантăш вăрçăнса вăхăта иртермен, çав кунах кĕрĕк лавккине вĕçтернĕ. Çи-пуç тăхăнса пăхсах ывăнса çитнĕ. Юлашкинчен пĕрне, хăйне чи килĕшеккенине, илсе таврăннă. Енчĕкре укçа çукки те пăшăрхантарман ăна. Халĕ кирек хăш япалана кредитпа илме пулать вĕт. Çитменнине, упăшка та кăмăлсăрланмĕ. Çемье пусĕ кунĕн-çĕрĕн ĕçлесен кивçен хăвăртах татăлĕ.

Арçынсем пĕр уява та сиктересшĕн мар. Ĕç хыççăн эрех ĕçмелли тупăнсах тăрать. Эх, йĕрке хуралçисене хурал тăратмалла та çавăнта. Тепĕр тесен, вĕсене никам та сыхласа çитереймĕ. Канмалли кунсенче вара кил хуçине вăратма йывăр. «Атя яла. Хăвăртрах пуçтарăнса тух», – ирех шăнкăравлать юлташ. Килти çăмăл машинăна хăех тапратса тухнă вăл. «Упăшку ирĕк пачĕ-и?» – «Çывăрать. Вăл йĕркене кĕриччен каç пулĕ». Чăнах, нимрен те хăрамасть манăн тантăш. Хăвăртах çитрĕмĕр яла. Юлташ машинăпа хальтерех çўреме вĕреннĕ тесе те калаймăн. Уй, мĕн чухлĕ кăмпа тупрăмăр, майăр пуçтартăмăр. Хваттерте ларнă пулсассăн нимсĕр юлаттăмăр.

Пĕрре хайхискер ĕçри столовăя бидонпа, пысăк контейнерпа анни тĕлĕнтерчĕ. Упăшки валли апат илме шухăш тытнă вăл. «Паян киле часах çитеймĕп. Çĕнĕ лавккана кĕрсе тухасшăн. Сивĕтмĕш пуш-пушах. Мăшăра мĕн те пулсан çитермелле вĕт», – терĕ хĕрарăм. Çитсе кĕрсенех яшкана кастрюле, катлетпа нимĕре çатмана ярса ăшăт та – пулчĕ те. Меллĕ вĕт капла. Ывăнса килекен арçыннăн кăмăлне тупма пĕлет вăл. Мăшăрĕ апата çав тери юратса çинĕ. Çакăн пирки вăл тепĕр кунхине каласа кăтартрĕ. Манăн та унран тĕслĕх илмелле мар-ши?

Упăшкине итлеттерме те вĕренсе çитнĕ юлташ. Ыталаса илет те ăшă сăмахсем калама пуçлать. Лешĕ вара пĕçерет, тасатать, тирпейлет... Çав вăхăтра эпир сĕтел хушшинче чей ĕçсе ларатпăр. Эх! Юратаççĕ вĕсем пĕрпĕрне...

**Екатерина ЦВЕТКОВА.**

ЧУНРИ

## Иртнĕ кун ăшши

Çук, темле пулсан та манаймастăп сана. Шухăшлас мар тесе мĕн чухлĕ тăрăшмастăпши – кăлăхах. Пур пĕр аса килетĕн. Тăтăшах. Тунсăхлатăп сансăр. Чăннипех çапла. Акă халĕ те чун-чĕрем эсĕ шăнкăравласса кĕтет.

Иртнĕ куншăн антăхма кирлĕ маррине те лайăх пĕлетĕп, анчах чунăма хушаймастăп. Чĕрем сана аса илме хистет пулсан мĕн тăвам-ха? Хам та сисместĕп – каялла çавăрăнса пăхатăп. Мĕн тытать-ши унта? Мĕн ямасть-ши? Пачах ăнланмастăп. Анчах иртнисĕр тунсăхлатăп...

Сансăр йывăр пуласса чухлама та пултарайман. Ларса чун туличчен калаçас килет. Сан пек никам та ăнланаймасть-çке. Тен, юнашар мана итлеме, чунăма илтме пултаракан çукран эсĕ çитменни туйăнать? Иртнĕ кунăн ăшшине аса илсен чун кăштах та пулин лăпланĕ тетĕп-ши?

Усал сунтăн-ши? Ылхантăнши? Халĕ акă эсĕ телейлĕ. Эпĕ вара асапланатăп. Чĕрем калама çук хĕрÿ вутра çунать. Чунăма асар-писер тăвăл силлет. Çук-çук, ăмсанмастăп, савăнатăп çеç. Ырă сунса чиркўре миçе çурта çутман-тăр. Турă Амăшĕнчен сана çут малашлăх кўмешкĕн мĕн чухлĕ кĕлĕ туман-ши? Ыйтни çитнишĕн хĕпĕртетĕп.



Каллех пĕрле пулассишĕн çунмастăп эпĕ. Пирĕн çулсем çапла уйрăлса кайнишĕн те кулянмастăп. Анчах чунăма тем кăшлать. Канлĕх тупаймасть вăл. Лăпкăлăх шыраса канăçсăрланатьши?

Çакă-и чăн юрату? Сана асран кăларайманни, телей сунни, иртнĕ кунăн ăшшине çеç упрани?..

**ЯНА.**

**Нагпур хулинче /Инди/ 1993 çулхи раштав уйăхĕн 16-мĕшĕнче çуралнă Йоти Амгэ тĕнчери чи пĕчĕк çын шутланать. Çакна 2011 çулхи раштав уйăхĕн 18-мĕшĕнче, хĕр пĕрчи 18 тултарнă кун, рекордсен Лимка тата Гиннесс кĕнекисенче çирĕплетнĕ. Пике 62,8 см çÿллĕш, унăн йывăрăшĕ – 5,2 кг.**

# Чĕрĕ пукане



Хĕр малалла пачах та ÿсеймĕ – унăн пĕвĕн кĕске пулни ахондроплази чирĕпе çыхăннă.

Йоти валли пур япалана та ятарласа çĕлеççĕ, эрешсене шăпах ун валли ятран хатĕрлеççĕ. Пике пĕчĕк криватьре çывăрать, ятарлă савăт-сапапа усă курать – ыттисем уншăн ытла та пысăк.

Апла пулин те хĕр тантăшĕсемпе пĕрле ахаль шкулах çÿрет. Анчах унăн унта та – ятарлă пĕчĕк сĕтел-пуканпа парта. Вĕрентекенсем вара ăна нимĕнле çăмăллăх та памаççĕ, ыттисенчен пекех çирĕп ыйтаççĕ.

Ытти енчен Йоти тантăшĕсенчен нимĕнпе те уйрăлса тăмасть. Вăл DVD пăхма юратать, илемлĕ çи-пуç кăмăллать.

"Хам çакăн пек пулнишĕн эпĕ нимĕн чухлĕ те вăтанмастăп та, кулянмастăп та, – тет хĕр. – Пачах тепĕр май, мăнаçланатăп кăна: мана курмашкăн çынсем ятарласа килеççĕ. Ку мана питĕ килĕшет. Эпĕ ыттисем пек çынах вĕт. Ыттисем пекех шухăшлатăп, ĕмĕтленетĕп. Хампа ытти çын хушшинче нимĕнле уйрăмлăх та курмастăп".

Тăван хулинче Йоти – паллă çын. Ун патне ятарласа курма, унпа калаçма пыракан сахал мар. Теприсем ăна турă вырăннех хурса йышăнаççĕ. Хĕр вырăнти хăй юратакан поп-çăлтăрпа пĕрле Мика Синхпа пĕрле альбом та кăларнă.

Йоти амăшĕ, 45 çулти Раньяна Амгэ, çапла каласа кăтартать: "Çуралсанах вăл ытти ачаран ниммĕнпе те уйрăлса тăмастчĕ. Йоти чирĕ пирки вăл 5 тултарсан кăна пĕлтĕмĕр. Специалистсемпе канашларăмăр. Вĕсем вара пепке яланлăхах çакăн пек тăрса юлассине каларĕç".

Йоти чăнласах нимĕнрен те вăтанманнине пике кинора ÿкерĕнме ĕмĕтленни те çирĕплетет. Хальлĕхе унăн ĕмĕчĕ Болливудпа çыхăннă. Анчах та унпа та çырлахасшăн мар-ха вăл. "Манăн пысăк хулара ĕçлес килет, – тет Йоти. – Сăмахран, Бомбейра. Кинора ÿкерĕнес килет". Лондон та, Америка та илĕртет ăна.

Анчах та пикен ашшĕн, 52-ри Кишани Амгэн, шухăшĕ урăхларах. "Эпĕ унсăр пĕр кун та пурăнма пултараймастăп, – тет арçын. – Эпĕ ăна питĕ юрататăп, унпа мăнаçланатăп. Ун патне нумай гуру килет: ăна курасшăн. Нумайăшĕ пиллет ăна. Гурусем ун валли турăран вăрăм ĕмĕр ыйтса кĕлĕ тăваççĕ".

Йоти ĕмĕчĕ майĕпен пурнăçа кĕрсе пырать. 2009 çулта Амгэ çинчен документлă фильм ÿкернĕ. Çакăн хыççăнах хĕре реалити-шоуна чĕннĕ: унта хутшăнакан çамрăксем пысăк çуртра ушкăнпа пурăннă, тĕрлĕ хушăва пурнăçланă.

2012 çулта Йоти тĕнчери чи пĕчĕк арçынпа, Непалта пурăнакан Чандра Бахадур Дангипе, тĕл пулнă. Вĕсем иккĕшĕ Гиннесс рекорчĕсен кĕнеки валли пĕрле сăн ÿкерĕннĕ.

Кăçал вара Йотие "Американская история ужасов" шоуна хутшăнма чĕннĕ. Унта ытти çăлтăр та нумай пулнă.

# Иртнĕ ĕмĕр чиперукĕсем



**Америкăра йăлана кĕнĕ илем конкурсĕнче Мисс ятне Кира Казанцева тивĕçнĕ. Пикен ашшĕ-амăшĕ ку çĕршыва 1990 çулта Раççейрен куçнă. Маларах çемье Мускаврa пурăннă.**

**Илем тĕп конкурсне аллă ытла пике хутшăннă. Кира судьясене сăн-питпе кăна мар, артист пултарулăхĕпе те тыткăнланă. Юрă-кĕвĕ конкурсĕнче вăл хăйне пластик стакансемпе шаккаса пулăшса пынă. Илем королевине коронăсăр пусне укçан та преми тивĕçет – 50000 доллар. Укçана Кира вĕреннĕшĕн тÿлеме усă курасшăн.**

**Раççейре вара ку енĕпе мĕнлерех лару-тăру?**

### Пĕрремĕшсем

Совет Союзĕнче илем конкурсĕ пĕрремĕш хут чĕрĕк ĕмĕр каялла иртнĕ. Чиперуксен пĕр пайĕ союзра секс çуккине çирĕплетнĕ вăхăтра теприсем хăйсен 90х60х90 кĕлеткисене купальниксемпе хупласа, çÿллĕ кĕлеллĕ пушмак тăхăнса сцена çине тухнă. Акă вăл – капитализм, çĕн йĕркелÿ, çĕнĕ сăнсемпе çĕнĕ йĕркесем... Çакăн пек туйăннă иккĕмĕш ушкăнрисене.

"Совет Союзĕн мисĕ" титула Юлия Суханова тивĕçнĕ. 17-ри пике макăрса пĕтнĕ: малтанах – хăранипе, унтан – савăннипе. Умра телей кăна кĕтнĕн туйăннă: ăна та, ыттисене те. Пысăк куçлă чиперуксен урăхла пулма пултарать-и вара? Конкурса хутшăннă хĕрсем питĕ вăтаннă – вĕсен пысăк пайĕ шкулта кăна вĕреннĕ-çке. Опычĕ çукскерсем хăйсене тыткалама та пĕлмен, çавăнпах питĕ мăн кăмăллă курăннă. Совет Союзĕнче иртнĕ илем пĕрремĕш конкурсне Александр Масляковпа Леонид Якубович ертсе пынă. "СССрта илем конкурсне ирттересси пирки парти Тĕп комитетĕнчен хушу килчĕ, – каласа кăтартнă каярахпа "СССР мисĕ-1989" конкурса ертсе пынă Леонид Якубович. – Пĕтĕм инстанци витĕр тухнă хыççăн хушу Москонцерта çитнĕ, пире унта чĕнсе илчĕç".

90-мĕш çулсен пуçламăшĕнчех пурнăç калама çук улшăннă – экран çине ĕнтĕ темĕн те тухнă. Анчах ун чухне, 80-мĕшсенче, илем конкурсĕсене Раççей халăхĕ хăнăхман-ха. Мероприятие ÿкерекенсем те мăкăртатнă: "Кусем сцена çинче утнă чух çынсем асфальт хываççĕ". Вĕчĕрхеннĕ, вăтаннă, хĕрелнĕ, анчах та хăйсем чиперуксем çинчен кусĕсене илеймен.

Конкурса телекуравпа кăтартни пысăк пулăма çавраннă, хĕрсем – çăлтăрсене. Вĕсенчен кашнинех телейлĕ билет туртса кăларнă пек туйăннă. Модель е актриса карьери кĕтмесен те пуян упăшка пулатех... Тен, "Раççей" концерт залĕн сцени хыçĕнчех кĕтсе тăрать вăл – ют çĕр-шыв арçынни...

Чĕрĕк ĕмĕр каялла СССРта иртнĕ çак конкурсра Марина Майко Молдави чысне хÿтĕленĕ. "Ку мероприяти манăн пĕтĕм пурнăça çаврăса хучĕ, – каласа кăтартать вăл. – Провинцири пысăках мар хулара Тираспольте лăпкăн кăна пурăнаттăм. Кĕçĕн классене вĕрентекен учитель пулма хатĕрленеттĕм. Анчах та кинона çаклантăм. Пĕр вăхăтран мăшăрпа паллашрăм". Марина икĕ теçетке яхăн фильмра ÿкерĕннĕ, анчах чапа тухайман. Çапах шăпипе ÿпкелешмест вăл, хăйне капла та ăннă тесе шухăшлать.

Сăн ÿкерчĕкре пулас çăлтăр Оксана Фандера тунсăхлăн тăрать – конкурсра вăл иккĕмĕш вырăн йышăннă. Оксана Мария Калининăна наградăланине кичеммĕн сăнать. Маша та актриса карьери пирки ĕмĕтленнĕ. Ĕмĕтне пурнăça кĕртмешкĕн каярахпа Америкăна тухса кайнă. "Тен, манăн сăн-питĕм çапларах курăннă – мана çын вĕлересен рольне кăна сĕнетчĕç, – тет Мария Калинина. – Юлашкинчен мана çакă йăлăхтарса çитерчĕ. Эпĕ йогăпа кăсăкланма пуçларăм". Юлашки 7 çул Калинина йога инструкторĕнче ĕçлет. Конкурс-и? Вăл тахçан ырă тĕлĕкре пулса иртнĕ пек. Çитменнине, унăн тĕлĕкĕнче те мар. Вăл вăхăтра колготки те тупса илме май пулманнине, подиум çине тухиччен комсомол пухăвĕ иртнине вара халĕ ĕненес те килмест.

### Анăç илĕртмен

Конкурсантăсене Анăç хапăлласах кĕтсе илнĕ, анчах хĕрсем хăйсене тыткалама пĕлменни спонсорсене тĕлĕнтернĕ. "Эпĕ шкулта ĕçлетĕп. Хăй вăхăтĕнче контракта алă пусса Англие ĕçлеме кайманнишĕн пĕрре те ÿкĕнместĕп. Манăн пурнăçăм – шкул", – тет "Европа-1996" пĕрремĕш вице-мисĕ Елена Щербак.

Елена Европа шайĕнчи титула тивĕçнĕ. Совет чиперукĕсенчен сайра-хутра кама ăнăçнă кун пек. Пĕрремĕш вице-мисс Беларуçе тавраннă, направленипе ялти шкула ĕçлеме кайнă. 90-мĕш çулсенчи конкурсантăсенчен нумайăшне çакăн пек шăпа кĕтнĕ. Сас-хура тăрăх, ун чухне конкурссен йĕркелÿçисем хитрелĕхе кăна мар, вĕренÿре мĕнле ĕлкĕрсе пынине те шута илнĕ.

"Конкурс хыççăн мана Франците чĕннĕччĕ – унти Модель çуртне. Анчах та эпĕ килĕшмерĕм: манăн тата çулталăк вĕренмеллечĕ-ха, ылтăн медале тивĕçес шанăç та пурччĕ", – каласа кăтартать "СССР мисĕ-1990" Алена Балабанова. СССР мисĕн ячĕшĕн тупăшнăскер, Киргизи мисĕн титулне тивĕçнĕскер вăл юриста вĕреннĕ. Пысăк фирмăра ĕçленĕ. Кунта вара ăна илем карьера тума чăрмантарнă кăна. Халĕ Алена – ачапăча фотографĕ. Çемьеллĕ. Икĕ ывăл амăшĕ.

### Синкерлĕ шăпа

Пĕрисен пурнăçĕ хăть çапла та пулин аталанса пынă хушăра хаçат-журналта инкеклĕ шăпасем пирки те тăтăшах çырнă. Шупашкарти Александра Петрова вырăнти хурах еркĕнĕ пулса тăнă. Шавлă пĕр хирĕçÿре унăн пурнăçĕ те таталнă. "Раççей мисĕ-1996" Светлана Котова паллă киллерпа туслă çыхăну тытнă. Пикен вакланă ÿтне Грецире тупнă... Вĕсене илем çăлса хăварайман. Тепĕр тесен, илем Совет Союзне те çăлса хăварайман...

### Юлашки

СССР илем юлашки конкурсĕ çĕршыв арканса кайиччен пĕр-икĕ уйăх маларах 1991 çулта иртнĕ. Хроникăра нимĕн те сыхланса юлман унран. Конкурс йĕркелÿçисем хăйсен хушшинче хирĕçсе кайнă та вĕсенчен пĕри йăлт вăрланă, çав шутра – Çĕнтерÿçĕ коронине те. Совет юлашки мисĕ – Эльвира Шамсутдинова.

"СССР чиперукĕн ятне чи юлашкинчен тивĕçнĕччĕ. Чап мана халĕ кăна хăваласа çитсе пырать. Ун чухне кам пĕлнĕ-ха çĕр-шыв арканасса? Çĕнтерÿçĕсем ман умĕн те пулнă, малашлăхра та конкурссем иртессе пурте шаннă. Халĕ вара пурте иртнĕлĕхшĕн, Совет Союзĕшĕн тунсăхлама пуçларĕç. Халĕ кăна çакна ăнланса пыратпăр: эпир пурĕ те виççĕн кăна вĕт-ха – Совет Союзĕн мисĕсем!" – аса илет "СССР-1991 мисĕ". Эльвира Шамсутдинова модель пулнă. Каярахпа хăйĕн ĕçне йĕркеленĕ – илем салонĕ уçнă. Халĕ вара вăхăта ытларах çемйипе ирттерет.

Иртнĕ ĕмĕр чиперукĕсем вăхăт шунă май ыттисенчен ниммĕнпе те уйрăлса тăман хĕрарăмсене çавраннă. Çут çанталăк панă илемпе тĕрĕсех усă курнă-и вĕсем – вăхăт çак иккĕленĕве сирме пулăшнă кăна.



